Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви
Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ
Филологи кафедри

**Технологи картти**
Урок теми: Шахмат вăййи
Тăван (чăваш) чĕлхи: 6 класс (вырăс чĕлхиллĕ шкул)


Хатĕрлекенĕ –
Шупашкарти 49-мĕш шкулта
Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен
Керукова Галина Алексеевна
Телефон: 8-917-655-49-67


Шупашкар – 2018

# СОДЕРЖАНИ


**1. ПРОЕКТ ЙĔРКИ** 3 стр

1. Предмет 3 стр
2. Класс 3 стр
3. Шкул 3 стр
4. Тема (пай) 3 стр
5. Урок теми 3 стр
6. Урок тĕсĕ 3 стр
7. Технологисем 3 стр
8. Харкамăн (пайăррăн) пĕлӳ илмелли тĕллевсем 3 стр
   - *Права*
   - *Тĕллевпе тупсăм*
   - *Моральпа этика*
9. Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсен тĕллевĕсем 4 стр
   - *Йĕркелӳ*
   - *Хутшăну*
   - *Информаци*
10. Предметăн ятарлă пĕлӳ илмелли тĕллевĕсем 4 стр
    - *Вĕренекенсен пĕлӳ, пултару, хăнаху ĕçĕ-хĕлĕ*
    - *Вĕрентӳ хевти-талпанавĕ*
11. Чĕлхе теорийĕ 4 стр
12. Мелсемпе меслетсем 4 стр
13. Технологисем 5 стр
14. Словарь ĕçĕ: а) ăнлантармалли пай; ă) çырма вĕрентмеллли пай 5 стр
15. Курăмлăх хатĕрĕсем 5 стр
16. Кăтарту хатĕрĕсем. 5 стр
17. Урок эпиграфĕ. 5 стр

**II. ПРОЕКТ РЕЗУЛЬТАЧĔ**

1. Урокăн тулли технологи картти. Урок теми: Шахмат вăййи (6 класс). 6 стр
2. Урокра усă курнă презентаци. 15 стр

## 1. ПРОЕКТ ЙĔРКИ

Вĕренӳпе кăсăкланма хавхалантарни, хăйне хăй хисеплени, хăйĕн ăс-тăн шайне пĕлсе хаклани, вĕренĕве кăмăлпа хутшăнма явăçни, вĕренӳре харпăр хăйĕн тивĕçлĕхне туйма, хăйĕн пултарулăхне шанма вĕренни, кăмăл-сипет енчен хăйне тирпейлĕ тытма пĕлни, сывлăха упрама вĕренни.

**Предмет:** Тăван (чăваш) чĕлхи тата литератури

**Класс:** 6 класс

**Шкул:** вырăс чĕлхиллĕ шкул

**Тема (пай):** Пушă вăхăтра.

**Урок теми:** Шахмат вăййи..

**Урок тĕсĕ:** çĕнĕ пĕлӳ илмелли виçĕ тапхăрлă урок.

**Технологисем:** вăйă, ушкăнпа вĕренни, пĕрле ĕçлесе вĕренни, харкамлăха аталантарасси, «Критикăллă» шухăшлава аталантарасси, сывлăха упрасси, системăллă-ĕçлевлĕхлĕ.

**Харкамăн (пайăррăн) пĕлӳ илмелли тĕллевсем:**

- ✓ **Права:**

Пушă вăхăта усăллă ирттермеллине ăнланни.

- ✓ **Тĕллевпе тупсăм:**

Хайлава вуланă май, ача хăй вăй-пултарулăхне шаннă май ĕç суйласа илме ăнтăлни.

- ✓ **Моральпа этика:**

Халапа вуланă май чăн пурнăçра та çынсем шах (пуян, анчах ăс-тăн енчен айван) тата ăстаçă (тарçă, чухăн, ăслă) пекех пулнине курма вĕренни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсен тĕллевĕсем:**

1. **Йĕркелӳ:**

Кирлĕ информацие вĕренӳ кĕнекинче шыраса тупма пултарни; пур ĕçе те кăмăлпа хутшăнма явăçни.

2. **Хутшăну:**

Тĕрлĕ мелпе – măшăррăн е ушкăнпа ĕçлесе, пĕччен е иккĕн кĕнекепе, электрон пособипе, Интернетпа усă курса информаци тупма хăнăхни.

3. **Информаци:**

Пĕр темăпа çыхăннă материала вуласа тишкерме, кирлине суйласа илме пĕтĕмлетӳ тума пултарни; тишкерӳре схемăсемпе ятарлă паллăсемпе усă курма пĕлни.

**Предметăн ятарлă пĕлӳ илмелли тĕллевĕсем:**

1. ***Вĕренекенсен пĕлӳ, пултару, хăнаху ĕçĕ-хĕлĕ:*** Шахпа ăстаçа танлаштарса пĕрпеклĕхсемпе уйрăмлăхсене тупни *(тема, тĕп шухăш, сăнарсем)*. Илемлĕ вулав хăнăхăвне йĕрлени. Çак уйрăмлăхсем çинчен хăй шухăшне çыхăнуллă калани.

2. ***Вĕрентӳ хевти-талпанавĕ:*** кĕнекере панă текстри тата харпăр хăйĕн кăмăлне палăртса хайлаври пулăмсене хак пама пултарни.

**Чĕлхе теорийĕ.** „Шахмат” сăмах „шах” тата „мат” ăмахсем пĕрлешнипе пулса кайнă. Шахмат спорт тĕсĕсем шутне кĕрет.

**Мелпе меслетсем:** хĕвеллĕ кластерпа е синвейнпа кăсăклантарса яни; ыйту-хурав; учитель сăмахĕ; тишкерӳ, шырав, словарь ĕçĕ; эпизодсем тăрăх калаçу ирттерни; ыйтусене хуравлама вĕренни; ваттисен сăмахĕсемпе пĕтемлетӳсем тума хăнăхнине малалла аталантарни**,** рольсемпе вулани, синквейн туни, хайлавăн тĕп шухăшне палăртакан йĕркесене тупса

вулани, илемлĕ, ăнланулла вулани; вуланă хайлава хак пани, уйрăмшарăн тухса калаçма хăнăхни, пĕтĕмĕшле тишкерӳ йĕрки тăрăх пĕтĕмлетӳсем тума хăнăхнине аталантарни.

**Технологисем**: вăйă, ушкăнпа вĕренни, пĕрле ĕçлесе вĕренни, харкамлăха аталантарасси, «Критикăллă» шухăшлава аталантарасси, сывлăха упрасси, системăллă-ĕçлевлĕхлĕ

**Словарь ĕçĕ:** а) **ăнлантармалли пай:** парăмра юлать – остаётся в долгу, чĕнтерет – вызывает, хăй ăшĕнче чеен кулса илет – про себя хитро улыбается, малалла та çавнашкалах ӳстерсе пыр – прибавляй и дальше в таком возрастающем порядке, пурнăçран юлнă çын – отсталый человек.

ă) **çырма вĕрентмелли пай:**

**Курăмлăх хатĕрĕсем:** урок презентацийĕ (*кластерпа синквейн);* Интернетран илнĕ материалсем, кĕнекесем; валеçсе памалли материал *(карточкăсем).*

**Кăтарту хатĕрĕсем:** компьютер, презентаци, мультимедиапроектор.

**Урок эпиграфĕ:** Сахал та çитет, нумай та пĕтет. *Ваттисен сăмахĕ*

**Урокӑн тулли конспекчӗ.**

Урок теми: Шахмат вӑййи (6 класс).

<table>
<tr><td>Предмет, класс</td><td colspan="3">Тӑван (чӑваш) чӗлхи тата литератури, 6 класс (вырӑс шкулӗ)</td></tr>
<tr><td>Урок теми</td><td colspan="3">Шахмат вӑййи</td></tr>
<tr><td rowspan="2">Урок тӗллевӗсем</td><td>Харкамӑн (пайӑррӑн) пӗлӳ илмелли тӗллевсем</td><td>Предметӑн пӗрлӗхлӗ результачӗсен тӗллевӗсем</td><td>Предметӑн ятарлӑ пӗлӳ илмелли тӗллевӗсем</td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
</table>

| | | | |
|---|---|---|---|
| | **1. Права:**<br>Пушă вăхăта усăллă ирттермеллине ăнланни.<br>**2. Тĕллевпе тупсăм:**<br>Хайлава вуланă май, ача хăй вăй-пултарулăхне шаннă май ĕç суйласа илме ăнтăлни.<br>**3. Моральпа этика:**<br>Халапа вуланă май чăн пурнăçра та çынсем шах (пуян, анчах ăс-тăн енчен айван) тата ăстаçă (тарçă, чухăн, ăслă) пекех пулнине курма вĕренни. | **1. Йĕркелӳ:**<br>Кирлĕ информацие вĕренӳ кĕнекинче шыраса тупма пултарни; пур ĕçе те кăмăлпа хутшăнма явăçни.<br>**2. Хутшăну:**<br>Тĕрлĕ мелпе – мăшăррăн е ушкăнпа ĕçлесе, пĕччен е иккĕн кĕнекепе, электрон пособипе, Интернетпа усă курса информаци тупма хăнăхни.<br>**3. Информаци:**<br>Пĕр темăпа çыхăннă материала вуласа тишкерме, кирлине суйласа илме пĕтĕмлетӳ тума пултарни; тишкерӳре схемăсемпе ятарлă паллăсемпе усă курма пĕлни. | 1. ***Вĕренекенсен пĕлӳ, пултару, хăнаху ĕçĕ-хĕлĕ:*** Шахпа ăстаçа танлаштарса пĕрпеклĕхсемпе уйрăмлăхсене тупни *(тема, тĕп шухăш, сăнарсем)*. Илемлĕ вулав хăнăхăвне йĕрлени. Çак уйрăмлăхсем çинчен хăй шухăшне çыхăнуллă калани.<br>2. ***Вĕрентӳ хевти-талпăнăвĕ:*** кĕнекере панă текстри тата харпăр хăйĕн кăмăлне палăртса хайлаври пулăмсене хак пама пултарни. |
| Урок тĕсĕ | Содержанийĕпе – текста тишкермелли урок | Тĕллевĕ тāрāх – çĕнĕ пĕлӳ илмелли урок | Форми тāрāх – хайлава тĕпчемелли урок |

| | |
|---|---|
| Урокра кирлĕ ĕç хатĕрĕсем | компьютер, проектор, Интернет-ресурс |
| Урокра кирлĕ кăтарту хатĕрĕсем | Слайдсем: «Кам? Мĕнле? Мĕн тăвать?» ыйтулллă хĕвеллĕ кластерсем», «„Ансăр” тата „Анлă” ыйтусем“, таблицăллă кластер тата синквейн, „Венн унки“, словарь ĕçĕ |

**Урок юхăмĕ**

| **Урок тапхăрĕ** Этап урока | **Ĕçлевлĕхлĕн тĕп енĕсем** Вид деятельности | **Вĕрентекен ĕçĕ** Деятельность учителя | **Вĕренекенсен результачĕсем (ĕçĕ-хĕлĕ)** Деятельность ученика | **Меслетсемпе мелсем** Приемы и стратегии |
|---|---|---|---|---|
| **I. Кăсăк-лантарни** (5-10 минут) | 1. Класа йĕркелени, сывлăх сунни. | Ачасене сывлăх сунни, урока хатĕррине тĕрĕслени. | Вĕрентекене сывлăх суннаççĕ, хăйсем урока хатĕррине тĕрĕслеççĕ, вырнаçса лараççĕ. | Вĕрентекен сăмахĕ, ачасен сăмахĕ. |
| | 2. Çанталăк çинчен дежурнăйпа калаçни. | Ыйтусем пани. | Дежурнăй ачасене çанталăк çинчен ыйтусем парать, ачасем хуравлаççĕ. | Калаçу, ыйту-хурав, диалог. |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | 3. Фонетика зарядкине туни. | Сăвва вуласа пани. **(1 слайд)** | Сăвва вĕрентекенпе пĕрле хорпа вулаççĕ, пайăн-пайăн калаççĕ. | Хорпа сасăпа калани, илемлĕ вулав. |
| | 4. Пуç ватмăш тупсăмне пĕлни, урок темине калани. | Ачасене слайд çине кăтартаса пуç ватмăш вуласа пани, урок темин ятне пĕлме сĕнни. **(2 слайд)** | Шахмат фигурисен ячĕсене вулаççĕ, урок темине калаççĕ. | Ачасен умне проблема кăларса тăратни, ăна шутлани. |
| | Урок тĕллевне лартни. | Тупсăмне тупнă хыççăн урок темипе тата тĕллевĕпе паллаштарни. | | |
| **II. Ăнланса илни** (20-25 минут) | ***1) çĕнĕ темăна ăнлантарни:*** а) учитель вулани | «Шахмат ваййи» текстпа ĕçлени: Вĕрентекен кĕнекери текста илемлĕ вуласа пани. | Панă текста ачасем учитель хыççăн çурма сасăпа вулаççĕ. | Илемлĕ вулав, текста тĕрĕс, пĕр тикĕс, сăмахсене тĕрĕс пусăмласа вулани. |
| | ă) çĕнĕ сăмахсемпе ĕçлени | Слайд кăтартни, сăмахсене тĕрĕс вуласа пани, çĕнĕ сăмахсемпе | Ачасем учитель хыççăн слайд çинчи сăмахсене хорпа вулаççĕ, ушкăнпа | Ачасем пĕчченшерĕн калани, , словарь |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | предложенисем тутарни. **(3 слайд)** | калаççĕ, вĕсемпе предложенисем тăваççĕ, | ĕçĕ, ăнлану. |
| | б) черетпе пайăн-пайăн вулани, куçарни | Текста пайăн-пайăн вулама ыйтни. | Пайăн-пайăн вулаççĕ, куçараççĕ. | Вулав-куçару. |
| | в) текст тăрăх ыйтусене хуравлани | Текст тăрăх хуравлакан предложенисем тĕрĕс пулнипе пулманнине итлени, тĕрĕс пулмасан тӳрлетме ыйтни. **(4 слайд)** | Ыйтусем çине хуравлаççĕ. | Ыйту-хурав. |
| | г) текстăн кĕске содержанине çупкам кластерпа усă курса каласа пани | Текстăн содержанине 1-2 ачаран ыйтни, ачасене хаклав партарни. **(5 слайд)** | Çупкам кластерпа усă курса содержанине каласа параççĕ. | Кĕске монолог. |
| | ***2) Кану саманчĕ ирттерни.*** | Ачасене сăвă каласа зарядка тутарни. **(6 слайд)** | Сăвă каласа хусканусем тăваççĕ. | Сывлăха сыхлани. |
| | **3) Грамматика материалĕ патне куçса** | Япала ячĕсене, паллă ячĕсене, глаголсене | Правило йĕркелеççĕ, ăна тетрадьсем çине çырса | Ыйту-хурав, тишкерӳ, тĕпчев, |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | **кайни, унпа ĕçлени:**<br>а) таблица-кластер туни<br>ă) клоуз-тест çырни | тупни, ыйтусем пани.<br>**(7 слайд)** | хураççĕ. | пĕтĕмлетӳ. |
| | | Вĕрентекен ăнлантарни. | Клоуз теста пурнăçлаççĕ. | Клоуз тест туни, вулав. |
| | **4) Вĕреннĕ материала çирĕплетни:**<br>а) „Пулă шăмми”<br>ă) „Шах” „Çын” хĕвеллĕ кластер туни | Вĕрентекен ăнлантарни | Абзацсене вулаççĕ, ят параççĕ | План туни. |
| | | Ачасене икĕ ушкăна пайлани. | Ачасем ушкăнсенче кластерсенеа тултараççĕ, пĕрлештерсе каласа параççĕ; | Ыйтусем çине хурав тупма вĕренни, пĕрлештерӳ çыхăнтару, тема тăрăх калаçу иртттересси кластер туни. |
| | б) синквейн туни | Вĕрентекен ачасене синквейн тума хушни. | Тайга сăмахпа синквейн çыраççĕ, вуласа параççĕ. | Синквейн çырни. |
| **III. Рефлекси** | 1. сенсорная | Ачасене хутран касса | Кăмăла кура сарă е симĕс | Суйлав, |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| **(10 мин)** | | кăларнă сарă тата симĕс çулçăсем валеçсе пани. Кăмăла кура пĕрне доска çинчи карççинка çине çыпăçтарма хушни: симĕс тĕслĕ çулçă ман пурте лайăх тенине пĕлтерни, сарри – ман кăмăл хуçăк, урок килĕшмерĕ. | тĕслĕ çулçăсем çыпăçтараççĕ. | пĕтĕмлетÿ. |
| | 2. интеллектуальная | Карточкăсем валеçсе пани, анкета ирттерни. | Ачасем анкетăри ыйтусене хуравлаççĕ. | Карточкăри ыйтусене хуравлани. |
| | 3. физическая | Урок килĕшнĕ пулсан алă çупма, килĕшмен пулсан урапа тапăртатма ыйтни. | Алă çупаççĕ е урапа тапăртатаççĕ. | Суйлав, пĕтĕмлетÿ. |
| **Киле ĕç пани** (5 мин) | **Суйлавлă киле ĕç пани, урока вĕçлени:** | Виçĕ ĕçрен пĕрне суйласа илме сĕнни. | Виçĕ тĕрлĕ ĕçпе паллашса хăйсене килĕшекеннине е | Суйлавлă килти ĕç. |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | 1) „Шахмат” сăмахпа реклама çырни.<br>2) „Шахмат вăййи” текста кĕнекери ыйтусемпе усă курса каласа пама хатĕрленни.<br>3) Шахмат хăмине тата фигурисене ўкерчĕк ўкерсе килни. | | аталанма пулăшаканнине суйлаççĕ, дневника çырса хураççĕ. | |

*1№-лĕ хушса пани*

**Таблица кластер**

«Шахмат вăййи» текст // Андреев И.А. Чăваш чĕлхи: вырăс шкулĕн 6-мĕш класĕ валли /И.А.Андреев, Р.И.Гурьева, Н.А.Краснова, Е.А.Мулюкова – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015. – С. 94.

| № | Япала ячĕ | Паллă ячĕ | Глагол |
|---|---|---|---|
| 94 стр. 1-мĕш абзац | шахмат<br>вăйă<br>ĕмĕр<br>Инди<br>халап | çакнашкал | çуралнă<br>пур |
| 2-мĕш | çын<br>шах | пуян<br>пысăк | пурăннă<br>пулнă 11 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| абзац | тарçă<br>çĕр-шыв<br>хуçа | çĕнĕ | килĕшет<br>чĕнтерет |
| 3-<br>мĕш<br>абзац | тав | чаплă<br>ăслă | тупнă<br>килĕшрĕ<br>тетĕп<br>ыйт<br>паратăп<br>тенĕ |
| 4-<br>мĕш<br>абзац | клетка<br>пĕрчĕ<br>рис | чухăн | кирлĕ мар<br>куратăн<br>пар<br>ÿстерсе пыр |
| 5-<br>мĕш<br>абзац | ăстаçă | | кулса ярать<br>савăнса каять<br>ыйтатăн |
| 6-<br>мĕш<br>абзац | ăшĕнче | чеен | чĕнмест<br>кулса илет<br>хушать |
| 7-<br>мĕш<br>абзац | парăмра | | шутласа пăхаççĕ<br>çитмест<br>юлать |
| 8-<br>мĕш<br>абзац | пурнăçра<br>тĕнчипех<br>ваттисем<br>çамрăксем<br>арçынсем<br>хĕрарăмсем<br>Персире | авалхи | пулман-и<br>сарăлать<br>выляççĕ<br>юлнă<br>хунă |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | культурăсăр | | |
| ПУРĔ | 25 япала ячĕ<br>шахмат – 7 хут<br>вăйă – 8 хут<br>çын – 4 хут<br>шах– 6 хут<br>тарçă– 2 хут<br>çĕр-шыв– 2 хут<br>клетка – 3 хут<br>пĕрчĕ– 3 хут<br>рис – 2 хут<br>ăстаçă – 4 хут<br>пурнăçра – 2 хут | 9 паллă ячĕ | 30 глагол |

*2№-лĕ хушса пани*

**Синквейн**

вăйă
çĕнĕ, ăслă
аталантарать, кăсăклантарать
Çĕнĕ вăйă кăсăклантарать
шахмат

**Клоуз тест**

1) Шахмат вăййи … çуралнă.
2) Шахмат шутласа кăлараканӗ çинчен … пур.
3) Шахмат вăййине … шутласа кăларнă.
4) Ăстаçă вăйă шутласа кăларнăшăн шахран … ыйтать.
5) Ваттисем те, çамрăксем те, арçынсем те, хĕрарăмсем те … выляççĕ.
6) Шахматла выляма пĕлмен çынна … вулама е çырма пĕлменни пекех, культурăсăр, пурнăçран юлнă çын вырăнне хунă.

   1) Индире, Америкăра, Раççейра
   2) сăвă, халап, повеç
   3) тарçă, улпут, шах
   4) укçа, ылтăн, рис
   5) шахматла, шашкăлла, доминолла
   6) Персире, Индире, Китайра

Хаклав виçи
6 сăмах – «5» паллă
5 сăмах – «4» паллă
4 сăмах – «3» паллă

**Мĕн тăвать?** ыйтуллă «Хĕвел» кластер




**Мĕнле?** ыйтуллă «Хĕвел» кластер



д) **Кам? Мĕн?** ыйтуллă «Хĕвел» кластер




*5№-лĕ хушса пани*

**Икĕ (виçĕ) енлĕ дневник**

| Хайлаври цитатăсем | Эпĕ çапла шутлатăп |
|---|---|
| Мана нумаях кирлĕ мар. | Нумай та пĕтет, сахал та çитет. Лайăхрах шутласан, |
| Шутласа пăхаççĕ те - пĕтĕм çĕр-шывĕпе те ăстаçа тӳлеме рис çитмест иккен | Чылай чухне пурнăçра та (халапра кăна мар) чухăнсем пуянсенчен ăслăрах |
| Персире шахмат вăййине выляма пĕлмен çынна вулама, çырма пĕлменнисем пекех, культурăсăр, пурнăçран юлнă çын вырăнне хун | Эпĕ те выляма пĕлместĕп. Тав турра, эпĕ Раççейре пурăнатăп. Çĕр çинче шахматла выляма пĕлекен çынсем нумайрах-ши е пĕлменнисем? |

**Мĕн? (Кам? Мĕн тăвать?)** ыйтуллă çупкам кластер



**Пулă шăмми (фишбоун)**



***А н л ă (а н с ă р) ыйтусем***

| «Ансăр» ыйтусем | «Анлă» ыйтусем |
|---|---|
| Шахмата кам шутласа кăларнă? | Шахмат вăййи ăçта тата хăçан çуралнă? |
| Ăстаçă кам патĕнче тарçăра пурăннă? | Тарçă ыйтни нумай пулнă-и, сахал-и? |
| Шаха шахмат вăййи килĕшет-и? | Авалхи Персире шахмат вăййине выляма пĕлмен çын çинчен мĕн шутланă? |
| Ăстаçă шахран мĕн ыйтнă? | Шахмат çынна  мĕнле аталантарать? |

**Блум «чечекĕ»**


Шахмата кам шутласа кăларнă?
Ăстаçă кам патĕнче тарçăра пурăннă?
Тарçă ыйтни нумай пулнă-и, сахал-и?
Шаха шахмат вăййи килĕшет-и?
Шахмат вăййи ăçта тата хăçан çуралнă?
Ăстаçă шахран мĕн ыйтнă?

*10№-лĕ хушса пани*

## «Венн унки»



<table>
<tr><th>Уйрăмлăх</th><th>Пĕрпеклĕх</th><th>Уйрăмлăх</th></tr>
<tr><td>Шах</td><td rowspan="4">Çынсем,<br>вăйă иккĕшне те<br>килĕшет</td><td>Ăстаçă</td></tr>
<tr><td>пуян</td><td>чухăн</td></tr>
<tr><td>айван</td><td>ăслă</td></tr>
<tr><td>Çĕр-шыв хуçи</td><td>тарçă</td></tr>
</table>

**Усă курнă литература**


1. **Андреев И.А.** Чăваш чĕлхи: вырăс шкулĕн 6-мĕш класĕ валли /И.А.Андреев, Р.И.Гурьева, Н.А.Краснова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015. – С. 94.
2. **Крылова О.Н., Муштавинская И.В**. Новая дидактика современного урока в условиях введения ФГОС ООО. Методическое пособие. – СПб.: КАРО, 2013 (Серия «Петербургский вектор введения ФГОС основного общего образования»).
3. **Крылова О.Н., Кузнецова Т.С.** Рабочая программа: Методические рекомендации для разработки / О.Н. Крылова, Т.С. Кузнецова. – СПб.: КАРО, 2014 (Серия «Петербургский вектор введения ФГОС основного общего образования»).
4. **Трунцева Т.Н.** Проектирование технологических карт уроков литературы и русского языка. 5-9 классы. М. :ВАКО, 2015 (Мастерская учителя-словесника).